Яков УХСАЙ

# КУН КĔНЕКИНЧЕН

***1971, сентябрь-октябрь.***
**Карачри кĕрхи çанталăк.**

**Çырма палăртнисем:**
1. **Хушка çăлтăр.**
2. **Хура кураксене ырă çул сăмахĕ.**
3. **Текерлĕксем.**
4. **Чĕре.**
5. **2011 çулта çуралакан поэта.**
6. **Хур тĕкки.**
7. **Карачран ярса панă çыру.**
8. **Чăваш хурçи.**
9. **Кăйкăрпа поэт.**
10. **Пушкин Чăваш çĕршывĕнче.**
11. **Атăл çинче.**
12. **Байрон.**
13. **Чăваш поэчĕсем Ильинка мунчинче.**

***Авăн уйăхĕ***

**«Столь недостаточное знание своего родного языка, встречающееся нередко у лиц неграмотных, разумеется, не представляет собой ничего поразительного, но печально то обстоятельство, что то же самое явление, в силу некоторых причин, замечается иногда и у лиц вполне грамотных и даже получивших известное образование».**

**Н.И.Ашмарин – Опыт исследования чувашского синтаксиса, Казань, 1903.**

**Паян ирех тăрсан та, ыйăх килмест, вăл шухăшланипе те, чей ĕçнипе те сирĕлсе каять.**

**Ашмарин, стр.50. Çар иртсе кайсан паттăр нумай. Примечание Ашмарина: отчасти соответствует русской пословице: «После драки кулаками не машут».**

**Пирĕн асаттенĕн куçĕ курмасть. У нашего дедушки глаза не видят. Примечание Ашмарина: «Здесь оба глаза рассматриваются как один орган зрения».**

**«Утне çитмен – туртине». Не достающий до лошади по оглоблям (бьет).**

**Шыв хĕрринче пилешсем пиçеççĕ,**
**Çупкăмĕ-çупкăмĕпе шыва ӳкеççĕ.**
**Ула пилĕк качакан**
**Капан туртас йăли пур,**
**Леш кассенĕн хĕрĕсен**
**Айне шăрас йăли пур.**

Куракан çулпа çӳрет, курманни кăмака çинче выртать теççĕ. Курман кăмака çинче, куракан Мускавра теççĕ.

Курманнине курас килет, курнине сысасси килет.

Хĕрхенекенĕнне хĕрлĕ йытă çиет теççĕ.

23. Ирхине тăватă сехетре выртрăм, унччен «Пир çаппи» сăвăпа лартăм, юлашки куплетне пичетлесен те, ун пирки шухăшласа чун тухрĕ. Халĕ те, вырăн çинчен тăрсанах, ку куплет асра тăчĕ.

Хĕвел эрех сыпнă кукка пекех епресе тăракан пичĕпе тухнă, пур çĕрте те çуттисем ун йăлтăр-йăлтăр йăлтăркка. Яра кунах хĕвел пăхать, ăшăтасса ăшăтсах каймасть, хăяккăнрах пăхать.

«Чăваш хурçи» сăвă валли

Хурçă çуратакан тура Эсĕ, хурçă çуратакан турă, нăкăлăх, пиçĕлĕх, тĕреклĕх пар.

Чăваш ялĕсене вăрçа юрăхлă тимĕр-тăмăр япаласем сутма чарас.

*Пĕрремĕш Петр патша указĕнчен.*

Паян Ольгăпа иксĕмĕр юман пĕренесем сĕтĕртĕмĕр. Иртнĕ çул вăрлакансем пулнă. Коммунизм пирки нумайрах калаçсан та, çырсан та, вăрăсен шучĕ чакмасть, пур çĕрте те вăрлаççĕ.

24. Ĕнер çичĕ сехетре выртрăм, ыйхă часах килмест те, çывăрса кайма тăрăшрăм, паян виçĕ сехет çурăра тăтăм.

Паян арăм вилнĕренпе çурçĕр иртсен 2-3 сехетре икĕ çулталăк тулчĕ.

Трагеди валли

Шупуççынни хăйне якутский князь тенĕ, Тайăр Тимкки, унпа вĕреннĕ çын, Якутире пилĕк çул ссылкара пурăннă (1907 çул тĕрмере ларнă, 1908 çул ăна ссылкăна янă. 1908–1912.).

25. Шăматкун. Сехет чарăнса ларнă. Çанталăк тĕтреллĕ, çĕрле «Хура элчел» трагеди çинчен шухăшларăм. Вĕçне эпĕ Иванов тĕлĕкне кĕртесшĕн. Вăл çӳлĕ ту тăрринче Манфред пек тăрать. Байрон «Манфредне» – Бунин куçарнине – вуласа тухрăм. Халĕ вăл мана кăмăла каймарĕ; Байрон хăй те ухмаха тухнă пек туйăнчĕ.

Кун паян та хĕвеллĕ. Помидор тăварласа çирĕм те чиперех çыратăп, çынна яланах тăраниччченех çини кирлĕ тесе критиксене хирĕç çыратăп. Мана чĕр шуйттанăн курайман сăвăç Кĕлпук апшур тесе статья çырнăччĕ, ăна вăл хăйĕн ячĕпе мар, Резюков ячĕпе «Коммунизм ялавĕ» хаçатра кăларнăччĕ. Эх, эсир, вирьял чăвашĕсем, мĕншĕн литературăна пырса кĕрететĕр, ун таса храмĕнче сысса çӳретĕр. Иванов калашле, аса илĕр:

Нумай ĕçле, нумай çи,<br>
Хытă ĕçле, хытă ĕç!

*Салтак çырăвĕнчен*

Малалла ĕнтĕ мĕн турă парать. Йĕп тăрринче, шăллăм, тăратпăр.

Йĕппе пусă чавнă пек – вырăсла «Овчинка не стоит выделки» Ашм. V т. стр.197. Йĕп тăрринче ирттертĕм ку çĕре. – *Сизифов труд.*

Чăваш литературин аслашшĕ Н.Дедушкин. Чулкаç калавĕсем çинчен.

26. Хĕвел тухманччĕ, тăтăм, чей вĕретсе ĕçрĕм, «Чĕре» сăвва малалла çырма тытăнтăм. Ĕнер çурçĕрчченех çывăрма выртаймарăм. Ольга телевизор пăхма кайнăччĕ, Генăсем патĕнче пулчĕ. Генă хытă ӳсĕрĕлнĕ

хыççăн ăш-чикĕ çуннипе виçĕ витре шыв ĕçсе ячĕ, тет. Эрех çынна çунтарать, анчах ăна пĕлсе тăрсан та хам ĕçетĕп, ĕçнин инкекне нумайранпа пĕлетĕп. Çĕрле Байронăн «Небо и земля» мистерине вуларăм, кăмăла каймарĕ. Унта тулашни, кăшкăрашни, пурне те тиркени пур, ăс çук, пулсан та усал. Çăхан кăранклатни илтĕнет, вăл мана Шупашкара кайсан инкек курассине пĕлтернĕ пек хурлантарать.

«Нарспи» поэмăн «Ашшĕ-амăшĕ» сыпăкĕ çинчен пĕр пысăк статья çырмалла. Ун пирки пирĕн ăс-тăнсăр критиксем нумай пăтратнă.

Çанталăк тĕлĕнмелле хитре тăрать. Ку вăхăтра çырмалла та çырмалла. Ыран пуху, пăртакçă ăса кĕнĕ писатель пеккисем çӳлтисем пĕрре çеç мар хушнипе манăн выговорсене хут çинчен илесшĕн. Эпĕ Шупашкара выговорсем илме çеç килтĕм пулĕ.

Старик отошел к костру, наклонился и спокойно кинул на ладонь руки раскаленный уголь.

<u>И.Бунин</u>

Как холодно, росисто, и как хорошо жить на свете!

И.Бунин – Антоновские яблоки.

Нумай пулатчĕ вуламанни Бунина, вуларăм: Ăста!

<u>Киремет</u>. Охотников – <u>Утлах</u> Киремечĕ. Хăй вилнĕ, унăн чунĕ хăй лартнă <u>хурăн айĕнче</u> юлнă. <u>Никитин</u> – Ĕлĕк чăвашсем киремет патне укçа пăрахнă, халĕ – нухрат. Раккассипе Элшел хушшинчи Киремет умĕнчен иртнĕ чух калаçма та, кулма та юрамасть, тет. Киремет тесе çынна тытса хутлатакан турра калаççĕ.

Киремет арçури пек куçа курăнмасть. Йăва та пăрахаççĕ: Эсĕ, Киремет, ĕç те çи, пире ан тив.

<u>Кисрĕ.</u> Эх, ку ачана паян амăшĕ кисрĕ-çке! <u>Патакпа кис!</u> <u>Кисĕпе каврăçран</u> тăваççĕ.

Шăтман хурамаран
Туман Туртапуç
Ялĕнчи кукка çапла
Каласа паратчĕ.

Питĕ суякан пуплевпе юмах пуçламалла е ăна питĕ суйса пĕтермелле.

27. Çичĕ сехетре тăтăм. Çанталăк пĕлĕтсĕр, ăшă, темĕн чухлĕ çыхă – çĕрулми те, помидор та илсе тухрăмăр, йăтма питĕ йыв чĕ. Ялтан тухсан хăмлалăх патĕнче «Зил» машина килсе тухрĕ. Лайăх шофер килсе тухрĕ, кирпĕч турттарма каять иккен. Эпир çапла вара Ивановкăри кирпĕч савăтĕнче пултăмăр. Шупашкара килсе çитсен, кунта лайăх таксист тупăнчĕ. Питĕ ăнăçлă çитрĕмĕр хватттере.

Паян обкома чĕнтерчĕç, анкетăпа автобиографи çыртарчĕç. Ыран бюрора пăхса тухмалла.

Пуху пулчĕ. Ман выговорсене пурне те пĕтермелле терĕç, вуникĕ пăтлă Черепанова анчах хирĕç мăкăлтатрĕ. Лайăх çинĕ тата ывăннă хыççăн пуç ĕçлемест, пĕр йĕрке те хут çине ӳкмест.

«Правда» хаçатра ман çинчен статья тухнă, питĕ мухтанă.

«В битве за Берлин участвовало 6300 советских танков и самоходных орудий. А вот в Московской битве мы имели только 782 танка».

Д.Д.Лелюшенко, генерал армии, дважды Герой Советского Союза.

**28. Тăрасса ир тăтăм, çырма тытăнаймарăм, мунча кĕрсе килтĕм, анкета пеккисем çыртăм, обкомра та, союзра та пултăм. Вăхăт иртсе кайрĕ. Пилĕк сехетре пĕр шăла пломба ларттармалла.**

**29. Ĕнер врач патне каймарăм, питĕ ыйхă пусса килнипе 4 сехет çурăра выртрăм, çурçĕр тĕлĕнче вăрантăм. Çырма тытăнас!**

**Халĕ ман сĕтел умне пырса ларсан, хĕрача ачи Андрей портречĕ ман çине пăхать.**

**Паян сивĕ. Карачран çанталăк ăшă чух тухса тарма ĕлкĕртĕмĕр. Паян эпĕ кăнтăрла та çывăрса илтĕм, чылаях çывăртăм. Ларма пăртакçă сивĕ.**

**30.Тăватă сехетре тăтăм, «Чĕре» сăвва малалла тăсма шухăшлатăп. Вăл чăнах та тăсăлчĕ, вăрăмланса кайрĕ. Кĕске çырма пĕлместĕп. Пур сăвăра та пур шухăша каласа пĕтерес килет.**

**Обкома кайса килтĕм, унта ĕçлеме кĕнĕ Ольга Ивановна Талляпа калаçрăм, кайран чун лăпланнă, апат çинĕ хыççăн икĕ сехет хушши çывăртăм. «Чĕре» сăвва çыратăп, вĕçĕ курăнмасть.**

*Юпа уйăхĕ*

**1. Тăватă сехет çурăра тăтăм, тĕлĕк курмарăм, лăпкă çывăртăм. Пушкин Болдино ялне 1830 çул сентябрĕн 1-мĕшĕнче тухса кайнă. Хальхи календарьпе шутласан, ку сентябрĕн 13-мĕшĕ пулать. Пушкин пекех тăрăшас пулсан, манăн ĕçлемелли вăхăт: октябрь, ноябрь тата декабрь çурри – 13-мĕшĕ. Паян чиперех ĕçлерĕм – 168 йĕрке. Сăвă питĕ вăрăмланса кайсан та, пуçа килсе тăракан шухăшсене çырасах килет. Паян çанталăк чылаях сивĕ, юр çăвас пек хăратса тăрать.**

**2. Çапла ĕнтĕ çĕнĕ уйăх, çынсем масар çине кайса, леш тĕнчери çынсене асăнакан вăхăт çитрĕ. Унта манăн хăвăрт каймалла ан пултăр, пурнăçра та, ĕçре те вăй вылятăр!**

**Пилĕк сехетре тăтăм. Хулана перекет кассине анчах кайса килтĕм, ниçта кайса çӳрес те, курас та килмест. Пурте усал, кама пулин те элеклеме, епле пулин те нумайрах укçа илме хапсăнаççĕ. «Чĕре» сăвă чиперех пырать, хĕсес тесен те вăрăмланать.**

**Твардовский фин вăрçинче 143-мĕш дивизи çинчен сăвă çырнă. Эпĕ 141-мĕш дивизи çинчен поэма çыртăм. Уйрăм икĕ цифра хушшинче анчах. Эпир унпа иксĕмĕр пĕр çулпа пынă. Пирĕн тăр ухмах критиксем çакăн пек тĕлĕнтермелле фактсене ăнланса илеймеççĕ. Пирĕн литературăна пырса кĕрекен ухмахсем, хăйсене ăслă тесе картакансем ӳссе пыраççĕ.**

**Никаких снегирей сейчас нет в лесу. Они только зимой появляются.**

**Я.Мустафин – Рассказ «Живая запятая».**

**Уйăпсем çурçĕрте йăва тăваççĕ, чĕп кăлараççĕ, вара хĕл каçма пирĕн пата килеççĕ иккен.**

**3. Икĕ сехет çурăра тăтăм. Пĕрремĕшĕнче хутмаллаччĕ, халĕ те ăшăтмаççĕ. Пӳлĕмре сивĕ мар, тӳсме пулать. Каллех «Чĕре» сăвва ярса тытрăм. Вĕçĕ курăнмасть, тăсăлать те тăсăлать.**

**Леля паян 10 сехетре Мускава вĕçсе кайрĕ. Ирхине çумăр çуса тăчĕ. Халĕ лутра пĕлĕтсем сирĕлчĕç, тӳпе пăтранчăк.**

**Шăна вăкăр майраки çинче ларнă, тет. «Эпĕ ака турăм»,– тесе мухтанать. Вит.Исаев каласа пачĕ. Вăл мана питĕ лайăх ӳкернĕ, паян ман пата килсе ларчĕ.**

**4. Пилĕк сехетре тăтăм. Эпĕ «К.Иванов» альбом валли статья**

çырнăччĕ, ăна кĕскетнĕ, хăй пек çырса хăтланнă редактор. Халĕ ĕнтĕ манăн ăна ӳстерсе, çĕнĕрен хушса çырмалла иккен. Ĕлĕк çырнине хăваратăп, çавна çырса ларма тивет. Пирĕн редакторсем вĕрентме анчах пăхаççĕ.

Иванов çинчен çырнă статьяна кайса патăм, çынсемпе пăртакçă калаçса лартăм. Паян статья çырса та, çынсемпе палкаса та ывăннă хыççăн сăвă чарăнса ларчĕ, пĕтĕмпе 12 йĕрке çыртăм, вĕсене çырма йывăр пулчĕ, ыйхă пусрĕ.

5. Эпĕ тăрсан пилĕк сехет çитейменччĕ. «Чĕлхе» сăвă. Елена Охотников çинчен кĕнеке çырас пулсан, ун валли эпиграф:

Пуян вилет – мул юлать,

Ыр çын вилет – ят юлать.

Чӳречерен пăхатăп: малтанхи юр ӳкнĕ. Ирĕлет. Йĕпе. Карачран тухса тарма ĕлкĕртĕм. Партпуху 27-мĕшĕнче пулмасан, инкеке пырса лекеттĕм. Лăпăр-лăпăр çанталăк пуçланать ĕнтĕ.

Письма: Ю.Б.Лукину, М.Карунному, В.Ермакову, П.А.Матвееву, брату Прокопию, Туркину, Дмитриевой.

Обкомра хутсем çырса лартăм, темле орден партарма çыртарчĕç. Çула май издательствăна кĕрсе тухрăм, туртма аран сигаретсем шыраса тупрăм. Çанталăк йĕпе юрлă, вăл хăй йывăр тăнипе пуçа ыйхăпа пусать.

Паян Старшиновпа калаçрăм. Манăн поэмăсем пирки Мускавра статьясем хатĕрлеççĕ. Тавах Мускава.

6. Пилĕк сехет çитейменччĕ. Эпĕ тăтăм, «Чĕре» сăвва çырма тытăнтăм. Ĕнер пиччерен Кызыл-Орда облаçĕнчен çыру илтĕм, унăн кĕрӳшĕ те хăйсем патне хăнана чĕнеççĕ. Пĕлместĕп, хăш вăхăтра, ытла вĕри мар чух унта каясчĕ!

7. Тăвată сехетре тăтăм. Туртма çукки тарăхтарать. Шупашкарта пирус та, сигарет та çук. Николай Овчинников художник мана венгер сигаретти пĕр пачкă кĕртсе пачĕ тата Кондратьев юрист 12 пачка «Ту-134» илсе хунă, манăн пурнăç, тапак туртма йӳçĕ пулсан та, пыл пек тутлă. Виталий Исаев, Пăслăк ачи, ман чапа кăвак пĕлĕте çĕклесшĕн вĕтеленсе çӳрет. Ытти Шупашкар чăвашĕсем: – Ку пушкăрт шуйттанĕ хăçан эрех ĕçме тытăнать-ши, хăçан кайса выртать-ши? – тесе анчах хăяккăн пăхаççĕ ман çине. Эпĕ халĕ Архимед пек – «Эврика!» тесе Шупашкарăн йĕпе юрлă урамĕнче çара пакка чупма та хатĕр.

Паян юнкун, чăваш каларăшле, йывăр кун, çавăнпа-тăр яра кунах ĕçлесен те сахал çыртăм.

Письма: Марусичу, Зайцу, Управление охраны авторских прав, Мустафину, Туркину.

Пифагор сказал, что для того, чтобы хорошо говорить, нужно семь лет молчать.

А.Сухово-Кобылин.

8. Тăвată сехет. Чӳречерен пăхатăп та, ниçта та пĕр çутă та курăнмасть: Шупашкарта эпĕ çеç çапла ир тăратăп пулĕ. Карачра та çаплаччĕ. «Чĕре» сăвва, тĕрĕссипе, çĕр çинчен каласа паракан трактата çыратăп. Вĕçĕ курăнмасть. Юлашки çулсенче çырнисенчен пĕри те çапăнса тухман: чăвашлисем выртаççĕ.

Эпĕ грузовик çинчен ыткăнса ӳксе сусăрланнă чухне 1937 çулхи ок-

тябрĕн 16-мĕшĕнче хĕл ларнăччĕ. Паян ирхине çĕр кăчăрт шăннă, пур çĕрте те юр.

Çĕлĕк хĕрĕпĕ, карттус хĕрри. Çĕлен хĕрпӳ тыттартăм çĕлĕке. Ирхине Лена Мускавран килсе çитрĕ, ман валли хĕллехи пальто тата нумай пачка сигарет илсе килнĕ.

«Байрон» сăвă валли.

Эпĕ ăна хăй чĕлхипе вулас тесе акăлчан чĕлхи вĕренесшĕн пултăм, анчах вăрçă салатрĕ шухăша. Эпĕ ун пек уксах пулсан та кайрăм вăрçа.

Некрасов

Милый друг, поняла ты давно. Здесь одни только камни не плачут.

9. Сăвă ячĕ «Энĕш шывĕ хĕрринче ĕнрешсе çӳрекен поэтсем». Паян кун ахалех калаçса иртсе кайрĕ.

10. Ултă сехет çурăра тăтăм. Пĕлĕтсем сайра. Хĕвел хĕрелсе тухать. Необходимо включить в автобиографию рассказ о чебоксарских марксистах с берегов реки Кайбулки (происхождение «Кай, булка!» – «Иди, булка!»). Научно-исследовательский институт языка и литературы находился на правом берегу Кайбулки, захламленной многими улицами и базаром. Этот же институт совершил подвиг – испортил словарь Н.И. Ашмарина. Первые семь томов были подготовлены автором, остальные «чебоксарскими марксистами». Они нанесли и сейчас наносят вред и урон во всех областях национальной культуры и в политике.

11. Эпĕ çичĕ сехетре выртрăм, вунпĕр сехетре вăрантăм, çапла вара çĕрпе ир хушшине кĕрсе хĕсĕнтĕм, çырма тытăнтăм, шухăшласа лартăм, Некрасова вуларăм. Эпĕ ытти çынсен йĕркинчен тухса ӳкрĕм, вĕсем пĕр шухăшсăр çывăрнă чухне шухăшлатăп та тарăхатăп та, чăн-чăн поэт пултăм. Чунсăр çынсене – ыйхă, мана, ялан чун вăркакан çынна – йывăр ĕç, тарăн шухăш!

12. Кун «Чĕре» сăввăн йĕркисемпе пуçланчĕ. Мана та, халăха та хура тăпра, ем-ешĕл çут тĕнче, тăп-тăрă шыв кирлĕ. Унта çеç пур чĕрчунăн пурнăçĕ! Паянхи ир питĕ ăнăçлă килсе тухрĕ: ултă сехетчен эпĕ 60 йĕрке çыртăм, Карач чăвашĕсене вăрçрăм, шĕвĕр çынсем терĕм. Ку тĕрĕс! Вуникĕ сехет çитет, ыйхă килмесен те выртатăп. Ирхине чипер сиксе тăма вĕренес!

13. Тупа туса сăмах каланă ырă та, усал та, кирлĕ те, кирлĕ мар та кун. Эпĕ пĕр уйăх пĕр татăлми пекех ĕçлерĕм, Карачран тухса каясшăн марччĕ, хамăн пултарулăхра «Карач кĕрĕ» тăвасшăнччĕ. Мана шыв та кӳрсе паракан çын çук чухне манăн кун пек вăйлă кĕр пулма пултараймасть, çапах та тăрăшăп, тата икĕ уйăхра мĕн çырăп-ши? Паян тăватă сехет çурăра тăтăм, Слакпуçĕнче каларăшле: эччĕ, çырма тытăнатăп. Кĕвĕçĕр, элеклĕр, тӳссе тăрăр, вирьял чăвашсем! Эпĕ сире юратмастăп пулсан, мана та ан юратăр! «Чĕре» сăвва пысăклатсах пыратăп: «Хура çĕрпе тăрă шыва юратакан чĕре памфлечĕ» ят паратăп. Ăна эпĕ Карач ялĕнче пур элекçĕсене çиленсе, вĕсене арăм вилнĕ хыççăн питĕ тарăхнипе, арăм вилнĕ кун, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, пуçланăччĕ, çапла ĕнтĕ 20 кун хушши çыратăп.

Известный английский артист Пол Скофилд: «Талант, данный природой, надо уметь использовать, иначе он зачахнет, как нетренированный мускул».

Ывăнни сисĕнет. Паян пĕр йĕрке те çыраймарăм.

14. Виççĕре тăтăм. Тĕлĕкре Алакĕрпе Алкана куртăм, вĕсемпе вăрçса кайрăм, Егоров профессор лекцине итлерĕм. Вăл мана эпĕ «çитмĕл çичĕ» тенĕ пуплевшĕн вăрçать пек. Каллех «Чĕре трактачĕ». Çанталăк тĕлĕнмелле хитре те ăшă тăрать. Урамри çăкасем кăштах тĕксĕмленнĕ, ешĕл çулçисене тăкма хатĕрленнĕ пек мар.

Маруç аппа, пирĕн патра вунă çул ытла пурăннă карчăк, килсе ларчĕ, нумай тарăхса калаçрĕ: унăн Укаç йăмăкĕ куç уçма памасть, тет, хытă ĕçет те ăна хĕнет, тет. Ку карчăк хăй лартнă пӳртĕнче пурăнма тухса кайрĕ, халĕ 75 çулта чухне ман пата каялла килесшĕн.

Паян чиперех çыртăм. Каçалапа перо патне алă пырсах каймарĕ. Ватăлатăп та, ывăнатăп та пулас. Ĕлĕк эпĕ вырăн çинче выртсах 150 йĕрке шухăшласа кăлараттăм, ирхине астăваттăм.

Халь, хăй вăхăтĕнче çырмасан, сахал йĕркесене те астăваймастăп. Эпĕ «Çĕр» поэмăна 10000 йĕрке ытларах шухăшласа хунине çырнăччĕ. Паян çырман, шухăшпа аташнă.

15. Çичĕ сехетре тăтăм. Çумăр. Пенсионерсем магазинсене апат шырама утаççĕ, лайăхрах çисе нумайрах пурăнас килет. Каллех «Чĕре памфлечĕ» çырмалла.

«Чĕмпĕр» валли

Яковлев: Эпĕ сире тутă тытасшăн, сире вĕрентесшĕн, сиртен çын тăвасшăн çерçи пек ир тăтăм, шăпчăк ыйхипе çывăрмарăм. Эсĕ уншăн мана питрен суртăн.

Нумай пулмасть эпĕ тĕлĕкре хура кураксене курнăччĕ. Халĕ чӳречерен хура кураксене куртăм. Халĕ те кăнтăр ăшшине кайман иккен. Тĕлĕнмелле! Кăçал вăрăм хура кĕр килет-тĕр.

Паян сахал çырнă – 41 йĕрке.

16. Шăматкун. Пилĕк сехет çурăра тăтăм. Ĕнер кунĕпе те, каçпа та вĕтĕ çумăр пĕрĕхсе тăчĕ. Ку кун манăн пурнăçра паллă: мана тăшман тусан, эпĕ автомобиль катастрофине акă çакă вăхăтра, кăвак çутă килнĕ чух, лекрĕм, Çĕрпӳ больницин палатине мар, коридорне лекрĕм. Ман инкек пирки мар, авари пирки Шупашкартан П.Н.Осипов пынăччĕ. Вăл манпа калаçмарĕ те, тарчĕ.

«Чĕре памфлечĕ» каллех. Каллех ун вĕçĕ курăнмасть. Тулта вĕтĕ юр. Ĕнер урамра пенсионерсем ирех нумайччĕ. Халĕ çук. Ĕнер çимеллине илсе тултарнă пуль-и. Паян ниçта та тухса çӳремерĕм. Тĕркĕш шухăшларăм, пĕтĕмпе те 70 йĕрке анчах çыртăм. Кăнтăрла йĕпеччĕ, каçхине чăн хытă юр çунă, çил те урамри çăкасене авăнтарсах вĕрет.

17. Эпĕ чăн-чăн çын йĕркине кĕтĕм пулас, пĕрре вăрантăм, тăтăм та каллех выртса çывăртăм, тăхăр сехет çурăра тăтăм, апат хатĕрлесе çирĕм, пăртакçă радио та итлерĕм. Манăн каллех «Чĕре трактачĕ» çырмалла. Вунпĕр сехетре ĕçлеме тытăнатăп.

Алексей Воробьев килсе ларчĕ, хăй сăввисене вуласа пачĕ, лайăх çырма пултарать, пурнăç тутлине те, йӳççине те пĕлет.

20. Паян пуху плчĕ. Эпĕ унта хамăн шухăшсене тухса каларăм.

– Лайăх,– терĕç хăшпĕрисем, мана тав туса алă та пачĕç. Паян çырасси пулмарĕ. Каçхине нумай лартăм, сăвă пуçа кĕмерĕ.

21. Ултă сехетре тăтăм, çĕр пирки шухăш килчĕ: «Земля моя, судьба моя». «Чĕре памфлетне» çырмалла. Шыв, тутлă шыв, сиплĕ шыв.

Ислюков патĕнче пултăм, икĕ сехет ытла лартăм. Вăл И.Я. çырăвĕсене вуласа пачĕ. Октябрĕн 23-мĕшĕнче Кăнна Кушки ялĕнчи шкул никĕсне хурса ăна уçнăранпа 100 çул тулать. Уяв пулмасть, шкулĕн çурчĕ кивĕ тет, Хусан тутарĕсем кун пек уява ирттересшĕн мар, тет.

22. Эрнекун. Хырăм кăштах ыратнипе тăватă сехет çитиччен вăранса кайрăм, ĕнер çурçĕр иртсен тин çывăрма выртнăччĕ. Ытти произведенисем пирки шухăшланипе «Чĕре памфлечĕ» сапаланса кайрĕ, питĕ хуллен çырăнать.

23. Çичĕ сехетре тăтăм. Чÿречерен пăхсан, çĕр шăннă пек, ытла сивĕ пек мар. «Чĕре памфлечĕ».

24. Пилĕк сехет çурăра тăтăм. Чĕре чикет, çавăнпа ман хăйĕн ĕмĕрне ирттерекен чĕре çинчен çырмалла.

М.В.Зайцева 50 çул тултарнă майĕпе орден пани çинчен хаçатсенче пĕлтернĕ. Вăл маншăн чипер çын. Пысăк вырăнта пулнă çынсене кайран халăх манса каять, урамра тĕл пулсан та, вĕсемпе çынсем калаçса каймаççĕ. Ĕнер Н.Старшиновран вăл куçарнă сăвăсене илтĕм. Коля чăнласах тăрăшса куçарнă.

25. Икĕ сехет çурăра тăтăм. Чĕре чиксе ыратни сисĕнет – ырра мар. Вăл арăм вилнĕ хыççăн пăсăлчĕ. Нумай элек илтмелле пулчĕ. «Чĕре трактачĕ» питĕ хуллен шăвать, çырма тытăннăранпа пĕр уйăх иртсе кайрĕ.

26. Пилĕк сехетре тăтăм. Çĕр шăннă, кăштах юр çунă. Паян Н.С. Тихоновран телеграмма илтĕм, мана вăл 60 çул тултарнипе саламлать. Çаплах «Дружба народов» журналтан та телеграмма килчĕ. Мускавра мана преми пани çинчен хыпар çÿрет тет, Вл.Костров Воробьева телефонпа пĕлтернĕ.

27. Пилĕк сехетре тăтăм, «Октябрь и человек» статья çырма тытăнтăм.

Мне кажется, все звери и птицы болеют расстройством нервной системы и умирают нередко от инфаркта сердца.

«Современник» издательствăна кĕнекене ярса патăм, пĕтĕмпе 332 стр.

*Елена УХСАЙ хатĕрленĕ*